Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă. | N 63 (4632) | *1998 çулхи июнь (çĕртме) уйăхĕн 3-мĕшĕ, юнкун* | *Палăртнă хакпа.*

Ĕнесене - çарансем çине

Нумай сĕт сăвасси тăрăшма хистет

Район администрацийĕнче иртнĕ юлашки канашлура сăвакан ĕнесемпе çамрăк пăрусене шутлă кунсенче çуллахи лагерьсене куçарса пĕтерес задача лартнă. Çакна ăнланмалла ĕнтĕ, выльăхчĕрлĕх ĕрчетессинчи юлашки вăхăтри йывăрлăхсем çак ыйтăва ытларах тимлĕх уйăрма хистенĕ. Ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн специалисчĕсен сăмахĕсем тăрăх, хресченсен хуçалăхĕсенчен чылайăшĕ выльăхсене çуллахи лагерьсене куçарнă ĕнтĕ, хăшĕ-пĕрисем вара тĕрлĕ сăлтава пула çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе пурнăçламан-ха. Пире шăп кăна вĕсенчен пĕринче пулма тӳр килчĕ - "Нурлатри сĕт-çу комбиначĕ" акционер обществин хушма хуçалăхĕнче.

Куракъелĕнче сĕт суса илес тĕлĕшпе кăтартусем пысăк мар. Çакăн сăлтавĕсем вара питĕ нумай иккен. Чăнах та, ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн зоотехникĕ Х.К.Фаткуллин калана тăрăх, кунта опытлă, хăйсен ĕçне пĕлекен дояркăсем çителĕклĕ. Анчах та сĕт ыйтăвĕпе ĕçлекен йĕркеллĕ специалист - зоотехник вара кунта çук. Тĕп специалистсăр, выльăхсене пăхмалли тата апатлантармалли технологие пурнăçлассине тивĕçтерекенскерсĕр, çак отрасльти ĕçе йĕркелесе яма май çук. Çавăнпа та икĕ кооператив пĕр витере усракан 160 ĕне валли пĕр тĕп специалист кирлех ĕнтĕ.

Чăнах та, хуçалăхра выльăхсене кĕтессине лайăх йĕркелесе янă. Ирхине 7 сехетрен тытăнса çĕрлеччен выльăхсене кĕтеççĕ, вĕсене кăнтăрла тата каçхине сума кăна хăваласа кĕртеççĕ. Кунне пăрака пама тытăнсан, сĕт суса илесси 50, 80 килограмм ӳснĕ.

Çуллахи лагерьсене илес пулсан, кивви ишĕлсе пĕтнĕ ĕнтĕ, çĕннине ĕлкĕртеймен-ха. Хальхи вăхăтра строительство ĕçĕсем пысăк хăвартлăхпа пыраççĕ: пулас лагерьтен инçех мар маларахах пĕве пĕвеленĕ, унтан шыв тимĕр валаксене пырĕ. Лагере çаплах электричество кĕртнĕ.

Сĕт-çу комбиначĕн директорĕ М.К.Камалетдинов лагере çитес çывăх вăхăтра туса пĕтерессе шанать пулин те, кунта пурнăçламалли ĕçсем чылай-ха: бетон площадка тумалла, сăвакан аппаратсем вырнаçтармалла тата ытти те. Çуллахи лагере кая юлса ĕлкĕртеççĕ пулин те, 400 пуç вырнаçмалăх лагерь выльăхсемшĕн питĕ меллĕ пулĕ. Хуçалăх выльăхсен шутне ӳстерме тытăннă ĕнтĕ: ăратлă 30 пăру илсе килнĕ, çитес çывăх вăхăтра тата 60 пуç илсе килмелле.

Мĕнпур ыйтусене шута илсе, Мансур Киямович отрасльти ĕçсене пысăк тимлĕх уйăрать.

- Кăçал выльăх-чĕрлĕх витисене тĕпрен юсас тетпĕр. Çаплах выльăхсем валли апат ытларах хатĕрлесе хăварма тăрăшăпăр.

Апла пулсан, сĕт туса илес тата сутас тĕлĕшпе кăтартусене ӳстересси çинчен çитес çул кăна конкретлă каласма пулĕ, тет вăл.

Ф.ЗИЯТДИНОВА.

Экзаменсем памалли вăхăт çитрĕ

Тунтикун, июнĕн 1-мĕшĕнче, пирĕн шкулсенче сочинени çырчĕç. Çак событие чăтăмсăр кĕтнĕ май, ялан теннĕ пекех, ашшĕ-амăшĕсен артерири пусăм çĕкленет, кăткăс предложенисенче пунктуаци правилисене тата ĕлĕкхи çулсенчи "ылтăн сочиненисене" тĕплĕ вĕреннĕ ачасен активлăхĕ уйăрăм палăрать. Нумайăшĕ "Евгений Онегин" çинчен ĕмĕтленнĕ, мĕншĕн тесен çак поэмăна тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлсе çитнĕ...

Анчах аслă поэтăн произведенине те çутатса памаллаччĕ. Темăсенчен пĕри "Юмах суя, çапах та систерсе калани пур"(А.С.Пушкин) ятлăччĕ, экзамен паракан вырăс литература халапне штемпель çапнă страницăсенче питĕ ăста та пĕлсе çырмаллаччĕ. Çак вăхăтчен питĕ шанчăклă упранă темăсен списокне ку хутĕнче А.С.Грибоедов хăйĕн чаплă та нихăçан сӳнми "Горе от ума" комедийĕпе уçрĕ, унтан ăна Л.Н.Толстой, А.А.Блок, И.А.Бунин малаллла тăсрĕç, кунта вара темăна ученик хăй кĕскен тĕплĕн пĕлтермеллечĕ. Произведенисенчен пĕрин тĕслĕхĕ çинче лирикăра пейзаж пĕлтерĕшне çутатма сĕннĕччĕ, литература е историллĕ материала тĕпе хурса - мĕн каласан та, шурă чуллă столицăна 850 çул çитнипаллă событи - Раççей историйĕнче Мускав рольне кăтартса памаллаччĕ. Экзамен умĕн каçхине ОРТ каналпа "Калина красная" кино курнисем сюжета, выляканскен ячĕсене тата вĕсен кăмăл-туйăмĕсене тĕрĕс пĕлнипе вĕçкĕнленсе, В.М. Шукшинăн çакăн пекех ятлă кĕнеки çинчен рецензи ăнăçлă çырма пултарнă пулĕччĕç.

- Темăсен диапазонĕ питĕ анлă, ачасем хăйсене килĕшнине суйласа илме пултараççĕ. Ку шкултан вĕренсе тухакансен пĕрремĕш пысăк тĕрĕслевĕ, вĕсем ăна ăнăçлă парасса эпир çирĕп шанатпăр, - тет хулари 4-мĕш номерлĕ шкул директорĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ, 22 çул стажлă филолог Роза Галимзяновна Идиатуллина.

Виçĕ вунпĕрмĕш классенче учитель-экзаменатор тата икĕ ассистент контроллесе тăнипе çав кун сочинени 93 ача çырчĕ. Классенче уяв пек илемлĕх хуçаланчĕ - тюльпан, сирень çыххисем, шапшурă блузкăсем... Сочинени çырма уйăрнă ултă сехетрен пĕрремĕшĕн вĕçĕнче ачасенчен чылайăшĕ темăсене суйласа илчĕç тата хăйсен шухăшĕсене çырма тытăнчĕç. Чи сахалли - 2,5 - 3 лист, çапах та учительсем сăнанă тăрăх, хĕрачасен ĕçĕсем пысăк туйăмлăхпа, сăнарлăхпа палăрса тăраççĕ, яшсем вара кĕскенрех, уççăн кăтартса памасăр çыраççĕ.

"Ылтăн" тата "кĕмĕл" медальсен кандидачĕсем тĕлĕшпе кăçал хытă требованисем кăларса тăратнă, вĕсен ĕçĕсене 15 сехетре тӳрех РОО илсе кайрĕç. Ыттисен сочиненийĕсене вара шкул филологĕсем хăйсем тĕрĕслеççĕ, паян ачасем хăйсен пĕрремĕш паллисем çинчен пĕлĕç.

Т.АЛЕКСЕЕВА.

Типĕ çанталăк ĕçре кансĕрлемест

"Тухăç-98" пресс-группа пĕлтерет

Çанталăк уяр та типĕ тăни акнă анасене хушса апатлантарас тата химилле ĕçлесе хатĕрлес ĕçсене пурнăçлассине хăвăртлатать. Районти хуçалăхсенчен чылайăшĕнче ку ĕçе яваплăх туйса пурнăçлаççĕ: кĕрхи культурăсем акнă анасене тымартан иккĕмĕш хут апатлантарнă ĕнтĕ. Çурхи культурăсен анисем çинче те хĕрӳ ĕç пырать, вĕсене те минералла удобренисем кĕртеççĕ. Районта çурхи культурăсене 21 пин гектара яхăн хушса апатлантарнă.

Çавăнпа пĕрлех ӳсентăрансене сăтăрçăсемпе çумкурăксенчен хӳтĕлес тĕллевпе пурнăçламалли мероприятисене те пысăк тимлĕх уйăрмалла. Чи малтан вара ку сахăр кăшманĕн анисене тивет. Хресченсен хуçалăхĕсен "Кондурча", "Киклĕ", "Рассвет", "Черемшан" ассоциацийĕсенче, сахăр завочĕн тата сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕсенче сахăр кăшманĕ акнă анасем çинче химилле хӳтĕлекен агрегатсем ĕçлеççĕ ĕнтĕ. Çапла майпа, французсен опрыскивателĕсемпе те усă курмалла. Çавăнпа пĕрлех пĕрчĕллĕ культурăсем акнă анасенче те химилле хӳтĕлекен мероприятисем ирттерме юрать.

Юрăсем, чечексем, саламсем чылай пулчĕç...

Ачасене хӳтĕлемелли куна Нурлатра çулсерен уявлатпăр. Анчах та кăçал çак паллă кун çумне тата тепĕр уяв - пионери 75 çул тултарни те хушăнчĕ. Уяв районти культура çуртĕнче иртрĕ. Кунта ачасен юхăмĕн ветеранĕсем, пионер вожатăйĕсем, учительсем, вĕренекенсем тата ĕçе йĕркелекенсем пуçтарăннăччĕ. Концерт Тутарстан Республикин гимнĕпе пуçланчĕ. Ветерансем хăйсен пионер отрячĕсемпе вĕсен активлă ĕçĕ тата 1940-1988-мĕш çулсенчи ачасен юхăмĕ çинчен каласа пачĕç. Кунта халăха социаллă хӳтлĕх паракан управлени начальникĕ Л.Н.Дильмухаметова, район тата хула администрацийĕн пуçлăхĕн аппарачĕн ертӳçи Ф.Р.Ногуманова тата Тутарстан еткерçисен союзне йĕркелекенсем тухса каласрĕç. Тутарстан еткерçисене салам, тав тата халал сăмахĕсем чылай каларĕç. Чечексемпе парнесем те нумайччĕ. Концерт программине Нурлат районĕнчи чылай шкулсем хутшăнчĕç. Тăван çĕршыв, çамрăклăх, туссем çинчен юрăсемпе сăвăсем янăрарĕç.

Юлашкинчен республикăри сборăн делегачĕ И.Мусина тухса каласрĕ. Концерт "Изгиб гитары желтой" юрăпа вĕçленчĕ, ăна залра ларакансем пурте ура çине тăрса юрларĕç.

Ку уяв пире пионерин иртнĕ кун-çулĕ çинчен ытларах пĕлме май пачĕ, вăл нумайлăха пирĕн асра юлĕ.

О.ПЕТРОВА,
4-мĕш номерлĕ шкул.

Ăçта аннесем, çавăнта уяв

Нумаях пулмасть районти хĕрарăмсен совечĕн членĕсем шкул-интернатри тăлăх ачасен ушкăнĕнче пулнă.

Паллах, вĕсем кунта пушă алăпа килмен ĕнтĕ. Совет çаплах ачасене "Девон-кредит", РКЦ, уйрăм çынсене пулăшу пама ыйтнă. Ачасем валли вĕсем тĕрлĕ кучченеçсем туяннă. Нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленири хĕрарăмсен совечĕ тăлăх ачасем валли канцтаварсен пуххине - тетрадьсем, ручкăсем, фломастерсем ăсатнă. Кĕскен каласан, çак кун тăлăх ачасемшĕн чăн-чăн уяв пулнă. Пĕрремĕшĕнчен, вĕсем патĕнче хăнасем сайра-хутра çеç пулаççĕ, иккĕмĕшĕнчен, хальхинче вара тахçантанпах кĕтнĕ хăнасем пулнă - ан тив, юттисем пулсан та аннесем, ашшĕ-амăшĕ пăрахнă ачасене ачашлани, юратни, ăшă туйăм питĕ кирлĕ вĕт. Çавăнпа сĕтел хушшинче ларнă чухне вĕсем вăтанмасăр, кăмăллăн каласса ларнă, чи пĕчĕккисем вара хăнасемпе çумлăрах пулма тăрăшнă. Ачасем хăйсен савăнăçне пытарайман: аннесем уяв парнелеме пултараççĕ çав.

Официаллă хроника

Ертӳçĕ улшăннă

Майăн 31-мĕшĕнче хресченсен хуçалăхĕсен Кузнецов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнче ĕçлекенсен пĕрлехи пухăвĕ пулнă. Е.К.Савиновăн заявленине тĕпе хурса, ăна хресченсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсенчен хăтарнă. Хуçалăх председателĕ пулма Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацире фермер пулса ĕçленĕ Ильсур Ильясович Мухамметова суйланă.

Хисеплĕ вулакансем!

Районта тухса тăракан "Туслăх" ("Дуслык", "Дружба") хаçата 1998 çулхи иккĕмĕш çурçуллăха çырăнтарасси малалла пырать. Çырăнтару хакĕ 6 уйăха - 26 тенкĕ те 40 пус, 3 уйăха - 13 тенкĕ те 20 пус, 1 уйăха - 4 тенкĕ те 40 пус.

Кашни художник чун-чĕрипе поэт



Художниксем хăйсен произведенийĕсенче ача чухне ĕмĕтленнине, темиçе çул хушши пуçтарăннă шухăштуйăмне, пурнăçри палла событисене ўкернĕ ĕçсене сĕнчĕç.

Кашни çыннăн хăйĕн характер, туйăм пекех, картинăсен авторĕсен те хăйсен сюжечĕсем, интересĕсем тата юратнă тĕсĕсем. Çавăнпа та произведенисем тăрăх та художникăн шалти туйăмне, шухăшне, ĕмĕтне пĕлме йывăр марччĕ.

Асхат Камалетдинован творчести уççăн палăрнипе пире тĕлĕнтерчĕ, унта вăл хальхи вăхăта ўкернĕччĕ. Пирĕн чĕресене çывăх пулăмсене вăл тĕрлĕрен çутă та тĕслĕ сăрăсемпе сăрланă.

Валентина Фомина ăшăпа, çутăпа куçа илĕртекен хăйĕн натюрморчĕсемпе асра юлчĕ. Унăн пейзажĕсем те никама та тимсĕр хăвармаççĕ. Эпир вăл çак выставка çинчен мĕн шухăшлатăн тесе ыйтрăмăр та, вăл акă мĕнле хуравларĕ: "Ку питĕ лайăх, вăл юлашки хут пулмасса шанас килет."

Светлана Севастьянован картинисенче те çутçанталăк саманчĕсене ăнăçлă кăтартнăччĕ.

Рашит Галиуллинăн ĕçĕ, тĕпрен илсен, палла ăстаçăсен произведенийĕсен репродукцийĕсем евĕрлĕччĕ. Çапах та выставкăна пынисене художникăн чĕрĕ кисчĕ, сăрăсен пуянлăхĕ тĕлĕнтерчĕ.

Юрий Будяшкинăн творчести пире жанрсемпе материалсем тĕрлĕрен пулнипе, ĕçĕсене ăста, тарăн шухăшласа пурнăçланипе тытăнларĕ. Кашни картина чĕрĕ пекех туйăнчĕ, кусем пысăк туйăмлă, урăхла пулма пултарайман сюжетсем. Сăмахран "Акатуй" ўкерчĕкре урхамахсем урисем айĕнчен тусан кăларса чупнине кăтартнăччĕ. Ю.Будяшкинăн творчести философиллĕ, тарăн содержаниллĕ поэмăри евĕрлĕ. "Кĕрхи юрă" картинăра ачасен ушкăнĕ, сарă çулçине тăкнă йывăç тăрринелле пăхса, темĕн итлет. Çўлтен, эфирти хум евĕрлĕ, кĕвĕ янăрать... Ку сăвăллă юрă çĕр çинчен пулас. Автор кашни произведение уйрăм туйăмпа, шухăшпа пурнăçланă. Хăйĕн творчествинче Юрий Зиновьевич пирпе тата çуллă сăрăсемпе кăна сăрлахмасть. Вăл çаплах гипспа керамика, ДВП материалĕсемпе усă курса пурнăçланă произведенисен авторĕ. Унăн графика ĕçĕ те кăсăклантарчĕ: чылайăшĕ вĕсенче хăйсемпе пĕрле ĕçлекенсене, çемйисене палларĕç. Художникăн тата тепĕр талантне те палăртмасăр хăварма юрамасть: вăл ĕлĕк-авалхи турăша питĕ тĕрĕс юсаса çĕнетнĕ, ку вăл вĕсен ялĕнчи чиркў çинчен аса илмелли пĕртен-пĕр япала. Автора хăйне сăмах калама ыйтсан, вăл акă мĕнле хуравларĕ: "Паянхи уяв - манăн пурнăçри чи пысăк ĕмĕт, ăна эпĕ яланах чĕрере тытнă".

Елена Мингалимован пултарулăхĕ пире хăйĕн лирикаллăхĕпе тĕлĕнтерчĕ. Картина ячĕсем: "Хĕвел анни", "Лăпкă", "Çумăр хыççăн". Вăл вĕсене питĕ ăста, пĕлсе ўкернĕ.

Нина Павлован юратнă жанрĕсем - пейзаж тата натюрморт. Ăна Раççейри тава тивĕçлĕ художниксем Н.В. Овчинниковпа Р.Ф.Федоров тата В.Петров патĕнче ўкерме вĕренни питĕ пысăк пулăшу панă.

Файруза Якупова, выставка хутшăннисем хушшинче ятарлă хатĕрленў иртменскер. Çапах та вăл гуашьпа, акварель сăрăсемпе пурнăçланă "Шурă пăрахут", "Иккĕн" пейзажсемпе натюрмортсем пўрне те килĕшрĕç.

Илья Тимофеев хăйĕн ўкерчĕкĕсенче пиртен кашнин чĕрине çывăх, çулталăкри вăхăтсене ўкернĕ. Вăл хăйне евĕрлĕхĕсемпе асра юлакан натюрмортсен авторĕ.

Вĕсем пирĕн çĕрĕн илемлĕхне мĕнле кураççĕ, çаплла ўкереççĕ. Вĕсем художниксем кăна мар, чунĕсемпе поэтсем те. Выставкăпа паллашнисем çакна хăйсем курса ĕненчĕç. Кунта пынисем художество выставкипе кăмăллă пулчĕç. Жюри, унăн составне Лениногорскри педучилище директорĕ Фанис Газетдинович Юсупов, училищери художествăпа графика уйрăмĕн заведующийĕ Галина Федоровна Чеханова тата искусствовед Нина Михайловна Горюнова (вĕсене ятарласа чĕннĕ), художниксен ĕçне пысăк хак пачĕç.

- Тĕрĕссипе каласан, РОО чĕннипе çула пуçтарăннă чухне, эпир çакăн пек пысăк та тарăн содержаниллĕ выставкăпа паллашасси, шанăç паракан авторсемпе тĕл пуласси çинчен шухăшламан та, - терĕ Фанис Газетдинович. - Пире вара кунта мĕнле сюрприз кĕтнĕ! Ку чăн-чăн искусство произведенийĕ! Чи пысăк паллă илнĕ ўкерчĕксене эпир Лениногорск хулинчи выставка залĕнче вырнаçтарма йышăнтăмăр. Хальхи выставкăра тăратнă ĕçсем вара çакна тивĕçлĕ.

Чи лайăх виçĕ автора авторитет дипломĕсемпе хаклă парнесем пачĕç. Вĕсем - Андреевкăри вăтам шкул учителĕ Ю.З.Будяшкин (I степеньлĕ диплом тата телевизор), А.М.Камалетдинов (II степеньлĕ диплом тата магнитофон), Нурлат хулинчи "Родничок" прогимназири художествăпа эстетикăна вĕрентекен воспитатель Н.М.Павлова (III степеньлĕ диплом тата магнитофон) пулчĕç. Çак выставка хутшăннă ытти авторсене те дипломсемпе асăнмалăх парнесем парса палăртрĕç.

Ўкерме юратакансенчен нумайăшĕ учительсем, малах вĕсем Лениногорскри педучилищерен вĕренсе тухнă, унта вĕсем сăнарлă искусствăна вĕрентекенсен специальноçне туяннă. Çавăнпа та, училищĕрен килнĕ хăнасем, хăйсен вĕренекенĕсемпе мăнкăмăлланине пытараймарĕç.

Пĕрремĕш выставка вĕçленчĕ. Искусствăпа творчество уявĕ вара хăйĕн задачине пурнăçларĕ теме пулать. Вăл ўкерме юратакан ытти çынсене кăсăклантарĕ, вăй хушĕ (вĕсем вара пирĕн сахал мар). Çавăнпа пĕрлех сăнарлă искусствăна юратакансем ăстăн енчен киленў те тупрĕç, хамăрăн ентешсемпе мăнкăмăлланнине тўссе иттерчĕç.

Ан тив, ку юлашки уяв ан пултăр.

К.ЯМАЛЕТДИНОВА.

Майăн 15-мĕшĕнче Нурлат историйĕнче пĕрремĕш хут çамрăксемпе ачасен клубĕнче художник-профессионалсемпе ўкерме юратакансен творчество выставки уçăлчĕ, унта вĕренту учреждениййĕсен ĕçченĕсене, хулари предприятисемпе организацисен ертўçисене, шкулта вĕренекенсене тата ытти сене те тараватлăн кĕтсе илчĕç, вырăнти талантсен ĕçĕпе паллашас текенсем чылай пулчĕç.

Ўкерчĕксенче: çўлте - Н.Павлован ўкерчĕкĕ; аялта - Н.Павлова; варринче - сулахайра Е.Мингалимова, сылтăмра жюри членĕ Г.Ф.Чеханова.

Н.Азизов сăнўкерчĕкĕ.

*** Пирĕн пата çыраççĕ**

Мунчан ĕç вăхăчĕсене улăштарма çук-ши?

Хисеплĕ редакци, хулара пурăнакансем сире акă мĕнле ыйтупа пăшăрхантараççĕ. Çуллахи вăхăтра халăха меллĕрех пултăр тесе магазинсен расписанисене улăштараççĕ, поездсем тата ытти транспорт валли ятарлă график тăваççĕ, сехетсен йĕпписене куçараççĕ. Анчах та хулари мунчан ĕç вăхăтне вара улăштармаççĕ: çулла та, хĕлле те 19 сехетчен ĕçлет. Шăматкунпа вырсарникун çынсем хăйсен дачисенче, участокĕсенче пулаççĕ, кунта вĕсем халтан кайиччен, каçчен ĕçлеççĕ. Ирне варринче те ĕç хыççăн каллех хăйсен участокĕсене васкаççĕ. Каçхине 7 сехетчен вĕсем çумлаççĕ е шăвараççĕха, киле таврăнсан мунча кĕрес тесен вара...

Пирĕн Нурлат республика пăхăнса тăракан хула статусне илчĕ, дача участокĕсен шучĕ çулсерен ўсет, шывпа тивĕçтересси те лайăхланать. Мунча ĕçлемелли вăхăта улăштарсан вара халăха питĕ меллĕ пулĕччĕ. Пирĕн сăмаха ертўçĕсем илтсен, çак ыйтăва татса пама пулăшсан питĕ лайăх пулмалла.

НИКОЛАЕВ, ФАСХУТДИНОВА, ИЛЮШКИНА, ВАЛИАХМЕТОВА, АЗИЗОВ тата ыттисем.

Пурăнать çемье Лачака ялĕнче...

Сăмах - Лачака ялĕнчи Сандрюхинсен çемйи çинчен. Сăмахĕ ахаль мар - салам сăмахĕ. Салам сăлтавĕ - çемье çулĕ. Çулĕн шучĕ - нумай-и, сахал-и - 30.

Çапла, кăçал, июнĕн 4-мĕшĕнче, Валентина Николаевнапа Виктор Никитович Сандрюхинсем çемье çавăрни 30 çул пулать.

Валентина Николаевна - Куракъел хĕрĕ. Ачачухнех вăл учитель пулас тесе ĕмĕтленнĕ. Тăван ялти 8 класлă шкула ăнăçлă пĕтерсен, Чăваш халăхĕн кăвар чĕреллĕ поэчĕ Çеспĕл Мишши вĕреннĕ çĕре - Теччĕ хулинчи педагогика училищине вĕренме кĕрет. Пултарулла хĕр тăрăшса вĕренет. 1966 çулта Валентина Николаевна училищĕрен вĕренсе тухать. Çав çултанпа паянхи кунччен вăл шкулта вăй хурать: пуçламăш класс ачисене вĕрентет. Çирĕм çул ытла вăл Лачака ялĕнчи пуçламăш шкул пуçлăхĕн çăмăл мар лавне туртать. Пĕтĕм вăйне хурса, чун ăшшине парса, тăрăшса, ĕçлес тесех ĕçлет шкулта Валентина Николаевна. Шкул картишне пырса кĕрсенех тирпейлĕх тытăна илет. Шкулне кĕрсен - юмах тĕнчине лекмерĕм-ши тесе йĕритавра пăхса, пĕр хушă чарăнса тăрас килет: сăмахпа калама çук асамлăх. Коридорти стена çине чăнах та юмахри геройсене ўкерсе хунă - тăхтав вăхăтĕнче ачасем халапри тусĕсемпе çакăнта выляççĕ. Шкул вĕренў хатĕрĕсемпе пуян, лаборатори те пур. Кашни уроках вĕренекенсен асĕнче ырă йĕр хăварать. Вăтăр çул хушшинче Лачака шкулĕнчен çĕр-çĕр ача вĕренсе тухнă, вĕсем тĕрлĕ професси илсе обществăна юрăхлă çынсем пулса тăнă. Çав хушăрах педагог çулне суйласа илнисем те нумай, вĕсем районти, республикăри шкулсенче ачасене вĕрентеççĕ.

Шкула курма килнĕ хăнасене Валентина Николаевна хăйĕн шкулне тулли, хавхаланулла туйăмпа, мăнаçланса кăтартса çўрет. Ĕç - савăнăç кўмелле теççĕ. Чăнах та, Валентина Николаевна ку енчен чи телейли тесен те юрать. Вăл хăйĕн юратнă ĕçне кăмăлпа пурнăçлани ăна пысăк савăнăç кўрет. Ачасене вăл питĕ юратать. Çакна куратăн та - Вĕрентекен (Учитель) пулма ăна Турă хăй çырнă тейĕн - Валентина Николаевна профессипе кăна мар - чун турттнипе чăн-чăн УЧИТЕЛЬ.

1996 çулхи аттестаци пĕтĕмлетĕвĕсене шута илсе В.Н.Сандрюхинана учитель-методист ят панă. Шкул çитĕнĕвĕсем çинчен калас пулсан, çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрленес енĕпе юлашки виçĕ çул хушши ĕнтĕ районта I-мĕш выран йышăнса пычĕ. Нурлат районĕн вĕрентў пайĕ тата Нурлат районĕн администрацийĕ Лачака шкулне çакăншăн Хисеп грамотипе чысларĕ. Кунта шкул пуçлăхĕн тўпи пысăк.

Газ кĕртес енĕпе те Лачака ялĕн шкулĕ районти пуçламăш шкулсенчен пĕрремĕшĕ пулчĕ.

Нумаях пулмасть, майăн 7-мĕшĕнче, Валентина Николаевна Чăваш патриархĕ Иван Яковлевич Яковлев çуралнăранпа 150 çул çитнĕ май районти учительсем валли чăваш чĕлхипе урок пачĕ. Пуçламăш классене вĕрентекенсем (КМО) урока пысăк хак пачĕç.

Лачака ялĕн шкулĕ кăçал Пĕтĕм Раççейри "Çулталăк шкулĕ" конкурса та хутшăнчĕ.

Валентина Николаевна Сандрюхина хăйĕн ĕçĕнче çитĕнўсем тунинче унăн мăшăрĕ - Виктор Никитович - пысăк выран йышăнать.

Виктор Никитович малтан водитель пулса ĕçленĕ. 1975 çулта Мензелинск хулинчи совхозтехникумран вĕренсе тухнă хыççăн "Родина" ассоциацире тĕп агроном пулса ĕçлет. Хăйĕн тивĕçĕсене Виктор Никитович питĕ тĕплĕ пурнăçлать. Çулталăкăн 4 тапхăрĕнчен виççĕшне вăл "Родина" ассоциаци уйхирĕсенче иртте-рет. Чăн-чăн çĕр ĕçченĕ теме пулать ăна.

Валентина Николаевнапа Виктор Никитович тăрăшса, чунне парса ĕçлекен мăшăр. Тирпейлĕ, таса, çутă çуртра пурăнаççĕ. Виçĕ ача çуратса ўстернĕ, ывăлĕсем - Владимир, Владислав, хĕрĕ - Алена пурнăç çулĕ çине тăнă. Вĕсен хăтлă çуртĕнче çемье ăшши хуçаланать. Çемье, пурнăç тыткăчи вăл, паллах, хĕрарăм. Валентина Николаевнана ку енчен пĕр ўпкев те çук: вăл тĕслĕх пулма тивĕçлĕ хĕрарăм-Анне.

Валентина Николаевнапа Виктор Никитович 30 çул пĕрле килĕштерсе пурăнаççĕ. Пĕтĕм тăванĕсем, юлташĕсем, ĕçтешĕсем йĕркеллĕ çемьене çак палла кун ячĕпе чĕререн саламлаççĕ. Иксĕлми телей, çирĕп сывлăх, ăнăçу, савăнăç, вăрăм ĕмĕр сунаççĕ.

Елена ЕРМИЛОВА,
ЧПУ аспирантки.



Упăшкипе арăмне Татьянăпа Николай Евсеевсене Анат Чаллăра пурте хисеплеççĕ. Юсав мастерской заведующийĕ тата нормировщица пулса вăй хуракан Татьяна ырă та тўрĕ кăмăллă пулнипе палăрса тăрать. Çемье пуçлăхĕ Николай - хуçалăхра ĕçре малта пыракан шофер. Кашни çуркунне вăл хирти ĕçсене активлă хутшăнать, акакан агрегатсене вăрлăхпа тивĕçтерет. Пирĕн фотокорреспондент ăна хирте ĕçленĕ вăхăтра ўкерсе илнĕ.

Çамрăксен çуртĕнчи буфет чĕнет

Нумаях пулмасть мана хулари Çамрăксен çуртĕнче ветерансене удостоверенисем панă чухне пулма тўр килчĕ. Кунти улшăнусем вара мана питĕ тĕлĕнтерчĕç. Хулара çынсем пĕрпĕринпе тĕл пулмалли вырăн пурри питĕ лайăх. Унта çамрăксем кăна мар, çуллăраххисем те çўреме пултараççĕ. Эпир пĕчĕк мăнукпа пĕрле пĕрремĕш хутри буфета кĕтĕмĕр. Кунта çутă та хăтлă, вĕри чей, тĕрлĕ пылак шыв, кондитер изделийĕсем сутаççĕ. Буфет ирхине 10 сехетрен ĕçлеме тытăнать. Кунта пурне те тараватлăн тивĕçтереççĕ. Манăн акă мĕнле шухăш çуралчĕ: кунта ачасене сĕтел хушшинче хăйсене мĕнле тыткалама вĕрентес тĕлĕшпе хăйне евĕрлĕ уроксем пама çук-ши? Пирĕн ачасене вара çакă питĕ кирлĕ.

Е.МИХАЙЛОВА.
Нурлат хули.

Этем тата çутçанталăк

Кăмăл туртни темрен те вайлăрах мар

е Киленўшĕн штраф тўлеттерни

Республикăри пичетре сунар йĕркисене пăснипе Нурлат районĕ пĕрремĕш вырăн йышăнать тесе пĕлтернĕччĕ. Çакăн çинчен каласа пама эпир районти сунарçăран Владимир Иванович БЕЛОВРАН ыйтрăмăр.

- Чи малтан тĕрĕссине калас тетĕп: пичетре пĕлтерни пирĕн районта браконьерсен шучĕ ăçта пысăкки пулнине пĕлтермест. Пачах урăхла, пирĕн патра ытти районсемпе танлаштарсан, сунар йĕркисене пăснă тĕслĕхсене чи нумай тупса палăртаççĕ.

- Çак кăтартусем - эсир активлă ĕçленин результачĕ тесе каласшăн-и?

- Çапла. Сăмахран, 1996 çулта сунар правилисене пăснă 6 тĕслĕх палăртнă пулсан, иртнĕ çул - 14. Ку сахал мар. Пирĕн организацин майсем, урăхла каласан, транспорт ытларах пулсан, правилăсене пăснă тĕслĕхсене тата ытларах палăртнă пулăттăмăр. Пирĕн вара УАЗ машинăпа "Буран" снегоходсăр пуçне, урăх нимĕн те çук вĕт.

- Сунар правилисене пăсакансене мĕнле наказани кĕтет?

- Раççей Федерацийĕн Кодексĕпе килĕшўллĕн правилăсене администраци енчен пăснăшăн вĕсене 1,2 уйăхри чи пĕчĕк ĕç укçин виçи чухлĕ штраф кĕтет. "Таврари çутçанталăка сыхласси" çинчен Закона пăснăшăн уйрăм çынсене 1 уйăхри чи пĕчĕк ĕç укçин виçинчен тытăнса 10 уйăхри ĕç укçи чухлĕ, должноçрисене виçĕ уйăхри ĕç укçинчен тытăнса 20 уйăхри ĕç укçи чухлĕ штраф тўлеттереççĕ. Çапла, иртнĕ çул сунара кирлĕ документсемсĕр тухнăшăн штраф тўлемелли сумма миллион тенкĕрен ытла ўстернĕ (кивĕ хакпа). Вăрмана сиен кўнĕшĕн икĕ миллиона яхăн тўленĕ. Законсăр пенĕ чĕрчунсен тирĕсемпе, ашĕпе усă курнăшăн вара закон тата та хытăрах айăплать. Сăмахран, иртнĕ çул пăши ашĕшĕн пĕр браконьера 2 миллион ытла тенкĕ штраф хунă. 1997 çулхи ноябрь уйăхĕнчен, вăрманти чĕрчунсен шучĕ чакнипе, вĕсене тытнăшăн тата та çирĕпрех явап тыттарĕç. Лицензи илме кăна 2,5 пин тенкĕ (çĕнĕ хакпа) тўлемелле. Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 258 статйипе килĕшўллĕн пысăк сиен кўнĕшĕн, вăрманти Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ кайăк-кĕшĕксемпе тискер чĕрчунсене законсăр пенĕшĕн, заповедниксемпе заказниксен территорийĕсенче автомототранспорт хатĕрĕсемпе усă курсан вара уголовнăй явап тыттараççĕ.

- Браконьерсемпе, закона пăсакансемпе кĕрешекенсем, энтузиастсемпе профессионалсем нумайăн-и?

- Вăрманлă вырăнсемпе пирĕн район республикăра пĕрремĕш пилĕк район шутне кĕрет. Пирĕн организаци Министрсен Кабинечĕ сумĕнчи сунарçăсен хуçалăхĕсен управленине кĕрет, пирĕн ведомство составĕнче - эпĕ хам тата профессиллĕ виçĕ сунарçă. Унсăр пуçне, сунарçăсен районти обществи ĕçлет, унăн председателĕ В.А.Меркурьев, вăл "Нурлатнефтешырав" ООО вăй хурать. Ăна икĕ егерь пăхăнса тăрать. Обществăна 300 çын взноссем тўлет. Кăçал эпир те сунар билечĕсем пама тытăнтăмăр, ăна 100 яхăн çын илнĕ ĕнтĕ.

- Сунара вутпа перекен хĕçпăшалпа тухнă кашни çыннăн сунар билечĕ пулмалла-и? Сунара тухма тата мĕнле документсем кирлĕ?

- Чи малтанах вутпа перекен хĕçпăшалпа усă курма ирĕк пани кирлĕ. Патшалăх пошлинипе палăртнă йĕркене тўленĕ пулсан унпа сунарçă усă курма пултарать. Ку правилăсене вара пурте пĕлеççĕ тесе шутлатăп.

- Çутçанталăка хуралланисĕр, сыхланисĕр пуçне, сирĕн тивĕçĕре тата мĕн кĕрет?

- Тăватă ураллă сăтăрçăсем те çутçанталăка сахал мар сиен кўреççĕ. Кашкăрсем вăрман санитарĕсем шутланаççĕ пулин те, вĕсем вăрманта пурăнакансене тата халăха сахал мар сиен кўреççĕ. Вăрмантан инçе мар вырнаçнă ялсенчи выльăхсене тытаççĕ, çаплах вĕсем пăшисен пăрăвĕсемпе хир сыснисен çурисене тапăннă тĕслĕхсем те пулкалаççĕ. Вĕсене йĕрĕсемпе шыратпăр. Виçĕмçул 11 кашкăр петĕмĕр, кунта пире сунарçăсем пулăшаççĕ. Капкăнсем лартмастпăр, мĕншĕн тесен специалистсем çук. Хальхи вăхăтра пирĕн вăрмансенче 6 кашкăр шутланать.

Тискер кайăксене пенисĕр пуçне, хĕллехи вăрăм уйăхсенче, апат запасĕ пĕтсен, вăрманти чĕрчунсене апатлантаратпăр. Пирĕн вăрмансенче нумаях мар пулин те, тĕрлĕ тискер чĕрчун пур: пăшисем те, çўлевĕçсем, ондатрасем, хăнтăрсем, тилĕсем, куянсем, пакшасем.

- Владимир Иванович, эсир питĕ пысăк та кирлĕ ĕç пурнăçлатăр, вăл сирĕн пурнăçăршăн чылай хăрушлăхсемпе çыхăннă. Сире çирĕп сывлăх тата ăнăçу сунас килет.

Ф.ЗИЯТДИНОВА
каласнă.

Американ-кăсен салачĕ

Сĕлĕ хăрпăкĕ 5 апат кашăкĕ, сивĕ шыв 5 апат кашăкĕ, сĕт 3 апат кашăкĕ, пыл 1-2 кашăк, 4-5 вăрман маййăрĕ кирлĕ. Сĕлĕ хăрпăкне шыва ярса пĕр каç лартмалла. Ирхине сĕт, пыл, вакланă маййăр хушса пăтратмалла. Çакăн пек салата пĕр уйăх хушши ирхи апат вырăнне çисе пурăнмалла.

Мĕнле уçас-ши?

Улах юррисем

Улмаллă-улмаллă шур чĕрçитти

Ай-хай, шăпăртатса çумăр çăвать,
Çĕмĕрт сапакисем шывланаç.
Чĕлхеçĕм калаçать, тутам кулать,
Ик куçăн хĕррисем шывланаç.

Улмаллă-улмаллă шур чĕрçитти,
Кĕлет сулхăнĕнче пĕтертĕм.
Пĕр турăран ырлăх кĕте-кĕте
Çамрăк ĕмĕрĕме ирттертĕм.

Йĕпхĕм хура лаша, ай, çилхине
Кам явнă-ши хура пурçăнтан?
Эп ыр курассипе курмассине
Кам ыйтнă-ши çулти турăран?

Чĕнтĕрлĕ те кĕпер, юман кашта
Çĕр ут каçса кайсан та авăнмĕ.
Çинçеех те пуçĕм, çамрăк чунçăм
Çĕр çын хурласан та хур пулмĕ.

Атьăр, тарăн шыва, ай, чăмар-и
Сывлăшша çаврăнса тухар-и?
Кĕске кăна куна, вăрăм ĕмре
Ырлăхпа ирттерсе ярар-и?

Пухса йĕркелекенĕ
Е.ИЛЮШКИНА.

Хуралтăвĕнчи кирпĕч завочĕ тăрех укçа тăлемелле хĕрлĕ кирпĕч сутать, 1 пин штук хакĕ 600 тенкĕ, организацисене 750 тенкĕ, бартерпа 880 тенкĕ. Хуралтăвĕнчи кирпĕч заводĕнче е 2-26-14 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлмелле.

1972 çулта туса кăларнă ГАЗ-24 сутатпăр. Телефон: 5-22-97.

* * *

К.Маркс урамĕнчи 6-мĕш çуртри 48-мĕш номерлĕ икĕ пăлĕмлĕ хваттере тата уйăм çурта икĕ пĕр пăлĕмлĕ хваттерсемпе улăштаратпăр. Телефон: 5-19-10.

ВАЗ-21011 сутăнать. Адрес: Молодежная урамĕ, 10-3.

"Союз-1000 мелочей" магазин ДВП-1,22х2,75 - пĕр листи 20 тенкĕ, сăрăсем пĕр банки 45 тенкĕ, велосипедсем - пĕри 630 тенкĕ тата Чистайри ЛВЗăн чи таса, лайăх эрех йăнĕ хакпа сĕнет. Магазин 8.00 сехетрен пуçласа 20.00 сехетчен кану кунĕсемсĕр ĕçлет, автовокзал çумĕнче вырнаçнă.

Тасатакан сооруженисенче профилактика ĕçĕсем ирттернипе июнĕн 8-мĕшĕнче 8.00 сехетрен пуçласа 18.00 сехетчен хула центрне ĕçмелли шыв памаççĕ.

МПП ЖКХ администрацийĕ.

Пĕлтерăсем

Икĕ пăлĕмлĕ хваттер тата 1997 çулта туса кăларнă, çĕнĕ, "Сенкер çурçĕр" тĕслĕ ВАЗ-2106 сутатпăр. Телефон: 5-13-56.

* * *

Çырнă палăксем, мрамор плитки çине 30х40 сантиметрлă сăнăкерчĕксем талăк хушшинче туса сутатпăр, хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Адрес: Ленинградская урамĕ, 14 е телефон: 5-37-39.

Хула варринчи 2 хутлă çуртри пĕрремĕш хутра виçĕ пăлĕмлĕ хваттер сутăнать. 2-12-50 номерлĕ телефонпа 17.00 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.

* * *

Ретранслятор çывăхĕнче туса пĕтермен гараж сутăнать. Адрес: Циолковский урамĕ, 7-14, 18 сехет хыççăн ыйтмалла.

* * *

1986 çулта туса кăларнă ВАЗ-21013 сутатпăр. Адрес: К.Маркс урамĕ, 1-38, 18 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.

* * *

"Техника" магазинĕнчи "Кодак-фотоуслугăсем" магазин хăвăр сăнăкерчĕкĕрсене июнĕн 8-мĕшĕччен тăлесе илме сĕнет. Илмен сăнăкерчĕксенчен "Пирĕн палланă çынсем" фотовыставка йĕркелĕç.

* * *

"НГДУ" ЖКХ çывăхĕнче лайăх гараж тата гараж валли çĕнĕ алăк сутатпăр. Адрес: Нефтяниксен урамĕ, 7-27, телефон: 5-26-70.

* * *

Хурт-хăмăр çемйисем сутатпăр. Телефон: 5-16-38.

* * *

Бортлă "ЗИЛ-130" сутатпăр. Телефон: 5-39-69.

* * *

Уйăм çурт сутăнать. Адрес: Энгельс урамĕ, 32.

* * *

1987 çулта Хакимзян Тагирзянович Мазитов ячĕпе панă тракторист удостоверенине тĕрĕс мар тесе шутламалла.

* * *

1991 çулта туса кăларнă ВАЗ-2109 сутăнать, хакĕ 23 пин тенкĕ. Адрес: Вахитов урамĕ, 3-6, телефон: 2-19-96.

* * *

МО-2М катмалли мăлатуксем сутатпăр. Адрес: Куйбышев урамĕ, 32-5.

* * *

Димитровград хулинчи çурта Нурлатри хваттерпе улăштаратпăр. Телефон: 5-17-01.

* * *

Çемçе сĕтел-пукан юсатпăр. Телефон: 5-19-80.

* * *

Мир урамĕнче çăра уççисен çыххине тупнă. Мир урмĕнчи 30-мĕш номерлĕ çурта пырса илмелле.

* * *

Александр Степанович Басуев ячĕпе панă документсемлĕ сумка тупакана Дружба урамĕнчи 70-мĕш номерлĕ çуртри 26-мĕш хваттере пырса пама ыйтатăп, парне пулать.

Шалти ĕçсене пурнăçламан çурта "Газель" машинăпа е хваттерпе улăштаратпăр, ытти вариантсем те пулма пултараççĕ. Дачная урамĕнчи 2-мĕш номерлĕ çуртри 4-мĕш хваттерте 17.00 сехет хыççăн ыйтса пĕлме пулать.

Саламлатпăр!

Лачака ялĕнче пурăнакан юратнă аттепе аннене Виктор Никитовичпа Валентина Николаевна САНДРЮХИНСЕНЕ мăшăрланнăранпа 30 çул çитнĕ май чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх, иксĕлми вăй-хăват, телей сунатпăр. Пире çуратса ўстернĕшĕн, тивĕçлĕ воспитани панăшăн тав тăватпăр.

Ывăлĕсемпе хĕрĕ.

Лачака ялĕнче пурăнакан юратнă тăвансене Виктор Никитовичпа Валентина Николаевна САНДРЮХИНСЕНЕ мăшăрланнăранпа 30 çул çитнĕ май чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.

Яланах хаваслă пулăр,
Такăр пултăр сирĕн çул
Мĕн шутлани пурнăçлантăр,
Пурнăçăр пĕр вĕçĕм ăнтăр.
Çулсем иртчĕр - ан ватăлăр,
Çамрăклăхран ан уйрăлăр.

Сидуллинсемпе Сандрюхина.

Андреевка ялĕнче пурăнакан юратнă мăшăра, аттене, кукаçее Василий Павлович ХМЕЛЕВА 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, канăçлă ватлăх, телей сунатпăр.

Мăшăрĕ, ачисем, мăнукĕсем.

Пĕлтерăсем

Пĕр пăлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 5-10-26.

* * *

Икĕ пăлĕмлĕ хваттер тара илетпĕр. Телефон: 5-16-03.

* * *

СПТУ патĕнче çурт сутатпăр е 2 икĕ пăлĕмлĕ хваттерпе хушса тăлесе улăштаратпăр, çĕнĕ мини-трактор сутатпăр. Телефон: 5-19-31.

* * *

ВАЗ-21061 а/м сутăнать. Адрес: Дружба урамĕ, 38-2, Тазеевран ыйтмалла.

* * *

Ленинградская урамĕнчи хăпартакан 36 хваттерлĕ çуртра тăватă тата виçĕ пăлĕмлĕ хваттерсем илме кăмăл пуррисем Октябрь МСОн 1-мĕш номерлĕ ПМКине пыма ыйтатпăр.

Администраци.

* * *

1995 çулта туса кăларнă ВАЗ-21213 "Нива" сутатпăр. Адрес: Школьная урамĕ 26-16 е 2-17-01 номерлĕ телефонпа 16 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.

* * *

Çĕнĕ автоприцеп сутатпăр. Телефон: 2-26-80.

* * *

Гараж валли вырăн тата алăк сутатпăр. Телефон: 5-13-81.

* * *

Т-70 трактор, СЗП-3,6 сеялка сутатпăр. Кушкă ялĕнче е 2-14-72 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлме пулать.

* * *

Мунча сутатпăр, хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Заводская урамĕнчи 2-мĕш номерлĕ çуртри 3-мĕш хваттерте ыйтса пĕлмелле.

* * *

Участоклă çурт сутăнать. Чулпан ялĕнче Усмановсенчен ыйтса пĕлме пулать. Телефон: 3-82-83.

* * *

3 çынран тăракан интеллигентлă çемье пĕр пăлĕмлĕ хăтлă хваттер тара илет. Телефон: 5-28-04.

* * *

Кухня гарнитурĕсем (Польша-Германи) сутатпăр, хаклă мар. Телефон: 5-22-20 (каçхине шăнкăравламалла). Лицензи Б-97 004778.

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информацийĕ пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860 2329.